

# ĔМĔР ÇУЛНЕ УÇНĂ ТĔРĔÇĔ



**ПУРНĂÇРАН уйрăлми пулăмсене тепĕр чухне эпир асăрхамастпăр та. Вĕсем ялан куç умĕнче, атте-анне пана ăс-тăнра, юн шайĕнче... Пĕринче çапла пĕр автор çырнă кĕнеке вулатăп. Çын хăйне еплерех тыткалани пирки, ун чунĕ çинчен «карма» ăнлав çине таянса питĕ ăсланса кăтартса парать. Вуланăçемĕн тĕлĕнсе-тĕлĕнсе пыратăп. Ара, ку япалана эпĕ мĕн пĕчĕкрен пĕлетĕп, мĕн çеремĕ уçассĕ кусем, тетĕп. Çав вăхăтрах хамăра та ӳпкелесе илетĕп. Мĕн-ма çав эпир хамăра хамăр хаклама пĕлместпĕр? Чăваш сывласа кăларнă «сывлăш» та ыттисемшĕн тепĕр чух сиплĕ пулма пултарать. Ĕмĕрсем тăршшĕ пуçтарăнса пынă илем пирки калама та кирлĕ мар. Çапах та акă чăваш тĕррине тиркекен те тупăнать. Вăл-мĕн примитив, темех мар. Çук çав! Пирĕн тĕрĕ турăсен чĕлхине упраса хăварнă. Вулама кăна пĕл. Акă мĕн каласа парать пирĕн корреспондента тĕрĕ пирки Татьяна Васильевна Шаркова ӳнерçĕ.**

**– Халăх калать: «Атăлпа юнашар çĕр айĕнче унран та пысăкрах тепĕр «Атăл» юхса выртать». Ӳнерлĕх те мана çапла пурнăçа тĕкĕрлесе тăракан, тен унран та пысăкрах тепĕр «пурнăç» пек курăнать. Ку тĕнчерен те аслăрах темле сиплĕ шыв... Туятăр-и эсир ăна?**

– Çапла, туятăп. Эпĕ вăл шывра ишетĕп. Тен ытларах та чӳхенесшĕн, курасшăн, вăйлăрах туясшăн... Анчах хальлĕхе çав шыв юхăмне кĕрсех кайнă тесе те каласшăн мар. Эпĕ пур унта, çук мар çав пурнăç тĕкĕрĕнче.

**– Чӳхенетĕп, тетĕн-и? Анчах çав шыва кĕрес тесен темле каçă урлă каçмалла. Уншăн тен тӳлемелле те? Пурнăç та çитмест тепĕр чух ун хакне кăларма.**

– Никама та кансĕрлемесĕр, тарăхтармасăр, хама хам пуçарса лартса, пĕчченлĕхре пурăнса тататăп ку парăма. Турă панине ăна вĕт мĕнпе те пулсан татас пулать. Кунта вăрттăнлăх пур. Шарлама та юрамасть. Ĕçне тăвасчĕ çеç. Эсир калашле чăн ӳнер вăл çĕр айĕнчи тепĕр Атăл пек. Пурин куçне курăнмасть, хăлхине кĕмест.

**– Никама систермесĕр каçса кĕретĕн, апла. Пĕчченлĕхре пулатăн. Хăвăн пурнăçупа тӳлетĕн... Анчах вĕт сан ача, упăшка, тăвансем пур. Вĕсене пăрахса пач урăх тĕнчене каятăн. Хăрамастăн-и?**

– Çук, хăрамастăп. Эпĕ вăйлă, çепĕç. Манра – ачалăх. Юнашар вăйлă арçын. Ĕçленĕ чухне эпĕ те вăйлă. Çемьене пăрахмастăп. Вĕсем унта манпа пĕрле каçаççĕ. Маншăн пăшăрханаççĕ, пулăшаççĕ. Эпĕ мĕн те-ха... Хĕрарăм чăн малтан амăшĕ-çке-ха. Пултарулăхра эпĕ никама та хӳреллĕ пăнчă хыçне хăварасшăн мар. Çемье яланах манпа, эпĕ вара вăхăтлăха командировкăра.

**– Эсĕ командировкăран каялла киле темле питĕ йывăр «кутамкка» çакса килетĕн. Мĕнле кĕтсе илет çемье? «Ах, тур, епле хаклă япала!» Е пач урăхла: – «Темскер туса çӳрерĕн?» – теççĕ.**

– Пырса кĕретĕп. Ним те каламаççĕ. Пăхаççĕ пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕччен. Ялан çапла. Кайран анчах сăмах хушаççĕ. Ятне яман,- теççĕ. Паллах, тиркени те пулать. Ăнланманни те... Таçтан, урăх тĕнчерен, ĕмĕрсем урлă илсе килнĕ те-ха «кутамккари» япаласене. Эпĕ вĕт шыракан çын, чун тупакан. Çавăнпа хаклаççĕ мана. Лайăх каласан савăнатăп. Хамăн тĕллевĕме яланах пурнăçлама тăрăшатăп. Пурнăçланă та!

**– Тĕллев сан вăл Турă çумнерех, халăх патнерех пулас. Халăх курать сан ĕçе. Тем япала? Те кирлĕ, те усăллă вăл? Мĕн туятăн халăх хакланă чух?**

– Эпĕ вăтанчăклăрах хĕрарăм. Ытла пит хăпартаççĕ пулсан, хитререх, шеллесерех каласан кăмăлсăрланатăп. Акă çимĕке Елчĕке кайсан халăх ман тĕрĕсен выставкине пырса курни питĕ савăнтарчĕ. Таçтан пĕлеççĕ вĕсем? Питĕ пысăк чунлă... Хулара эпир пăртак хытатпăр пулмалла. Сивĕнсе пыратпăр. Аçта кăна пулман пуль ман ĕçсем? Таллинра, Питĕрте, Мускавра... Пур çĕрте те, ытти халăх çыннисем те чăваш тĕррине пысăк хурса хаклаççĕ. Пысăк шайри ӳнер теççĕ. Хамăр республикăра питех ăнланмаççĕ те. Тĕнче кун пек йышăнасса шутлама та пултарайман.



**– Çĕр айĕнчи Атăл пек тапса тухать, апла, чăваш тĕрри. Тен халăхĕ хăй Атăл пек. Вăтăсем черет тăрса пăхаççĕ терĕн пĕринче.**

– Ку мĕне пĕлтерет? Халăх халĕ те, ĕмĕрсем иртсен те, тĕрĕлет. Авалтан пыракан ӳнере ăнланать. Садикре, тĕлĕнсе каймалла, пĕчĕккисем те, юнашарти ялсенчен килнĕ шкул ачисем те тĕлĕнсе пăхаççĕ. Вĕсем те ăнланаççĕ. «Мĕнех кураççĕ?» – теме пулать. Унта вĕт хăйне майлă композици. Ӳнерçĕ куç мĕн курнине ӳкерет. Тĕрĕçĕ вара кăшт авангардла шухăшлать тесен те тĕрĕс. Хăйне май курать. Кама мĕн ыраттарать, пултарулăхĕ мĕнле – çавăнтан килет. Мĕн хурлантарать, мĕн савăнтарать? Мана хама чăваш тĕрри çапла чăн чĕрĕлни савăнтарать. Ĕмĕрсен çулĕ, апла, питĕрĕнмен – уçăлса пырать.

**Павел МИХАЙЛОВ**
**калаçнă.**

***Татьяна Шарковăн çак кунсенче альбом çапăнса тухрĕ. Унта унăн чи сумлă ĕçĕсем, хаç панă статьясем, сăвăсем тата сăн ӳкерчĕксем. «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат «Русика» издательствăна халăхшăн çапла пысăк ĕç тунăшăн вулакансен ячĕпе тав тăвать, Татьяна Васильевнăна пултарулăхра тата пысăкрах ĕçсем хайлама çирĕп сывлăх, ăнăçу сунать.***

**Редакци.**